27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ФЕВРАЛЬ
21
ЮНКУН
34(6785) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВКП(б) Центральный Комитечĕ Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнă ятпа ЧĔНСЕ КАЛАНИСЕМ

1. Фашистла нимĕç захватчикĕсене совет çĕрĕ çинчен хăваласа кăларнă тата гитлерла çарсене Германи çĕрĕ çинче çĕмĕрсе пыракан çĕнтерÿллĕ Хĕрлĕ Çар, ирĕклĕхе кăларакан çар, сывă пултăр!

2. Тăван Çĕршыва фашистла нимĕç империалисчĕсенчен чыслăн хÿтĕлесе хăварнă аслă совет халăхĕ, унăн Хĕрлĕ Çарĕ тата Тинĕс-Çар Флочĕ сывă пулччăр!

3. Европăри цивилизацие фашистла аркатуçăсенчен сыхласа хăварнă хăватлă Совет Союзĕ сывă пултăр!

4. Тăван Çĕршывăн чыслăхĕшĕн, ирĕклĕхĕшĕн тата никама пăхăнманлăхĕшĕн Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсен ывăлĕсем паттăррăн çапăçаççĕ. Сывă пултăр Хĕрлĕ Çар—ССР Союзĕнчи халăхсен тăванлăхĕпе туслăхĕн çарĕ!

5. Пирĕн хуласемпе ялсене çаратса та тата аркатса пĕтернĕшĕн, хĕрарăмсемпе ачасене хĕн кăтартнăшăн, совет çыннисене вĕлернĕшĕн тата вĕсене нимĕç чуралăхне хăваласа кайнăшăн фашистла нимĕç ирсĕрĕсене хаяррăн айăпласа тавăрар!

Фашистла çĕлен-калтасене тавăру та вилĕм!

6. Англипе Совет Союзĕн тата Америкăн кĕрешÿри союзĕ фашистла нимĕç захватчикĕсене çĕнтерессн сывă пултăр! Фашистла Германие хĕвелтухăçĕнчен, хĕвеланăçĕнчен, çурçĕртен тата кăнтăртан аркатмаллах пыра-пыра çапар! Германи империализмне çĕр çинчен шăлса ыватăр! Пĕтĕм тĕнчери халăхсем хушшинче çирĕп мир туса хурар!

7. Хĕвеланăç Европăра гитлерла кĕтÿсене хирĕç наступлени туса пыракан Великобританипе Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен паттăр çарĕсене салам!

Акăлчансемпе американецсен хăюллă морякĕсене, фашистла пиратсене хирĕç кĕрешекенскерсене, салам!

8. Хĕвеланăçĕнче гитлерла Германие хирĕç кĕрешекен Франци халăхĕпе унăн çарĕсене салам!

Совет летчикĕсемпе пĕрле çапăçса, фашистла нимĕç варварĕсене аркатса пыракан «Нормандия» соединенин паттăр летчикĕсене мухтав!

9. Тăванла поляк халăхне, нимĕç захватчикĕсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларнăскерне, салам! Хĕрлĕ Çарпа пĕрле хăйĕн Тăван çĕршывĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçакан Польшăн хăюллă çарĕсем сывă пулччăр!

Сывă пултăр Совет Союзĕпе Польша туслăхĕ!

10. Тăванла Югослави халăхне салам! Хăйĕн Тăван çĕршывне нимĕç пусмăрçисенчен ирĕке кăларса çитерекен Ирĕклĕх Халăх çарĕ, Югославин паттăр çарĕ сывă пултăр!

Сывă пултăр Совет Союзĕпе Югослави туслăхĕ!

11. Фашистла ирсĕрсене хирĕç кĕрешекен тăванла Чехословаки халăхне салам! Чехословаки корпусĕн салтакĕсемпе офицерĕсем, нимĕç пусмăрçисене хирĕç Хĕрлĕ Çарпа пĕрле çапăçаканскерсем, сывă пулччăр!

Сывă пултăр Совет Союзĕпе Чехословаки туслăхĕ!

12. Тăвансем—славянсем! Нимĕç захватчикĕсене—славян халăхĕн вилĕмле тăшманĕсене тапăкланах çапса аркатас ĕçе пĕтĕм вăя хурар! Фашистла нимĕç вăрă-хурахĕсене пĕтерсе тăкассишĕн кĕрешекен славян халăхĕсен çапăçури союзĕ сывă пултăр!

13. Европăри халăхсене, нимĕç империализмне хирĕç кĕрешекенскерсене, салам!

14. Хĕрлĕ Çар воинĕсем! Сире, ирĕке кăларакансене, нимĕç каторгинче асаплланакан миллионшар совет çыннисем кĕтеççĕ. Хамăрăн тăвансене фашистла пусмăртан çăлса кăларар!

15. Хĕрлĕ Çар воинĕсем! Фашистла нимĕç захватчикĕсене пĕтерсе тăкмаллах пыра-пыра çапăр, тăшмана сывлăш çавăрма ан парăр! Ăна хаяррăн, совет хĕçпăшалĕн пĕтĕм вăйĕпе пыра-пыра çапăр! Малалла, хĕвеланăçнелле!

16. Хĕрлĕ Çарăн пехотинецĕсем! Тăшман оборонине хăюллăн та татăклăн çĕнтерсе пырăр, фашистла çарсене хыçранах йĕрлесе тата çĕмĕрсе пырăр, вĕсене çĕнĕ рубежсенче çирĕпленсе ларма ан парăр!

Сывă пулччăр совет пехотинецĕсем!

17. Хĕрлĕ Çарăн артиллерисчĕсемпе минометчикĕсем! Тупăсемпе минометсенчен хăватлăн та тĕл персе, тăшман оборонине арката-арката тăкăр, тăшманăн чĕрĕ вăйĕпе çапăçу техникине пĕтере-пĕтере тăкăр!

Сывă пултăр совет артиллерийĕ!

18. Хĕрлĕ Çарăн танкисчĕсем! Хамăр танксен çапăçури лайăх пахалăхĕсемпе пĕтĕмĕшпех усă курăр, тăшмана çĕмĕрсе те та хыçранах йĕрлесе пырăр!

Сывă пулччăр совет танкисчĕсем!

19. Совет летчикĕсем—пирĕн Тăван çĕршывăн соколĕсем! Сывлăшран хăватлăн пыра-пыра çапса, тăшманăн çарĕсемпе çапăçу техникине аркатăр, унăн çулйĕрĕсене çĕмĕре-çĕмĕре тăкăр, пирĕн наступлени тăвакан çарсене çул тасатса парса пырăр!

Сывă пулччăр совет летчикĕсем!

20. Хĕрлĕ Çарăн кавалерисчĕсем! Тăшман çарĕсене хăвăрт йĕрлесе пырăр, тăшман хушшине хăюллăн çĕмĕре-çĕмĕре кĕрсе кайăр, унăн флангĕсене çавăра-çавăра илĕр, фашистла нимĕç çĕлен-калтисене хупăрла-хупăрла илсе, пĕтерсе тăкăр!

Сывă пултăр советăн утлă çарĕ!

21. Тинĕс-Çар Флочĕн краснофлотецĕсемпе офицерĕсем! Тăшманăн тинĕсри çулйĕрĕсене вăйлăнрах пыра-пыра çапăр! Тăшманăн карапĕсемпе транспорчĕсене шыва путарăр, тинĕс тавралăхĕсене фашистла ирсĕрлĕхрен тасатăр!

Сывă пулччăр совет морякĕсем!

22. Хĕрлĕ Çарăн связисчĕсем! Çыхăну вăл—Хĕрлĕ Çарăн нервĕ пулнине, çапăçăва ертсе пымалли тата пур тĕрлĕ çарсене те çыхăнтарса пĕрле çапăçтармалли чи кирлĕ условин пулнине асра тытăр! Çыхăну ĕçне пур майсемпе те лайăхлатса пырăр!

Сывă пулччăр совет связисчĕсем!

23. Хĕрлĕ Çарăн разведчикĕсем! Разведка вăл—çарăн куçĕпе хăлхи пулнине асра тытăр! Тăшман вырнаçса тăнă çĕре хăюллăн кĕре-кĕре кайăр! Унăн шухăшĕсемпе ĕмĕчĕсене вăхăтра уçса палăртса пырăр! Пирĕн наступлени тăвакан çарсене тăшмана шанчăклăн çапма пулăшса пырăр!

Сывă пулччăр совет разведчикĕсем!

24. Сывă пулччăр пирĕн мухтавлă пограничниксем, совет çĕршывĕн чиккисене шанчăклăн хÿтĕлесе тăракансем!

25. Инженери çарĕсен боецĕсемпе офицерĕсем! Тăшманăн укреплениĕсене ăнăçлăн штурмлама, унăн тĕреклетнĕ пункчĕсене пĕтерсе тăкма, шывсем урлă каçма, мина лартнă вырăнсем урлă каçма, наступлени ăнăçлăхне вăйлатса пыма хамăрăн çарсене пулăшса пырăр!

Сывă пулччăр пирĕн мухтавлă саперсем, минерсем тата понтонерсем!

26. Хĕрлĕ Çарăн медицина работникĕсем! Советăн аманнă воинĕсен пурнăçне çăлса хăварассишĕн тата вĕсене строя тавăрассишĕн вăя шеллемесĕр, паттăррăн кĕрешĕр!

Сывă пулччăр Хĕрлĕ Çарăн медицина работникĕсем!

27. Çарсен тылĕнчи работниксем! Хĕрлĕ Çарăн автомобилисчĕсемпе çулйĕр работникĕсем! Хĕрлĕ Çар валли çапăçу техники, боеприпассем, снаряженипе апат-çимĕç вăхăтра илсе пырса тăрăр!

Сывă пулччăр çарсен тылĕнчи работниксем! Сывă пулччăр Хĕрлĕ Çарăн автомобилисчĕсемпе çулйĕр работникĕсем!

28. Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн гвардеецĕсем! Гвардин мухтавлă ялавĕсене чыслăн малалла илсе пырăр. Паттăрлăхпа хăюлăхăн, вăрçăри мастерлăхăн, наступленири хăвăртлăхпа хастарлăхăн примерне кăтартăр!

Сывă пултăр совет гвардийĕ!

29. Тăшман çарĕсене Хĕвелтухăç Пруссире çĕмĕрсе тăкнă тата нимĕçсене Берлин патне пымалли вырăнсенче аркатакан совет çарĕсене мухтав!

30. Силезире нимĕçсен оборонине аркатса тăкнă тата Одер шывĕн леш енче наступление вăйлатса пыракан совет çарĕсене мухтав!

31. Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе офицерĕсене, тăшмана Карпат тăрăхĕнче çĕмĕрсе пыраканскерсене тата пирĕнпе туслă Чехословакие нимĕçсенчен ирĕке кăлараканскерсене, мухтав!

32. Фашистла нимĕç çарĕсене Венгрире çĕмĕрсе тăкнă тата Будапешт районĕнче тăшман группировкине пĕтерсе тăкнă пирĕн çарсене мухтав!

33. Совет Союзĕн Геройĕсемпе Социализмлă Ĕç Геройĕсене—хамăр Тăван çĕршывăн чи лайăх ывăлĕсене—мухтав!

34. Совет Союзĕнчи ĕççыннисем! Фронтовиксен çемьисемшĕн тăрăшасси—мĕнпур совет патриочĕсен таса тивĕçĕ пулса тăрать. Тăван çĕршыва ирĕке кăларакансен çемьисемшĕн пурте тимлĕн тăрăшар!

35. Пурне те çар ĕçне вĕрентни пирĕн Тăван çĕршывăн кĕрешÿри хăватне тĕреклетет. Совет патриочĕсемпе патриоткисем! Çар ĕçне çине тăрса вĕренĕр, Тăван çĕршыва пултаруллăн та хăюллăн хÿтĕлекенсем пулма хатĕрленĕр!

36. Рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Фронта пулăшас тесе, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлĕр! Хĕрлĕ Çара танксем, самолетсем, тупăсем, минометсем, пулеметсем, автоматсем, боеприпассем ытларах та ытларах парса тăрăр! Çапăçу машинисен пахалăхне лайăхлатса пырăр!

37. Совет чугун çулĕсен работникĕсем, чугун çул çарĕсен боецĕсемпе офицерĕсем! Вăя шеллемесĕр тата терĕс-тĕкел ĕçлесе, Хĕрлĕ Çара ăнăçусем тума пулăшăр! Нимĕçсем аркатнă чугун çулсемпе сооруженисене хăвăртрах юсаса ĕçе ярăр!

38. Колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-семпе совхозсенчи рабочисемпе работницăсем, ялхуçалăх специалисчĕсем! Çуракине кăтартуллăн хатĕрленсе тата ăна ăнăçлăн ирттерсе, 1945 çулта пысăк тухăçлă тырпул туса илер! Фронтпа çĕршыва апат-çимĕçпе чĕртавар ытларах туса парар!

39. Совет интеллигенцийĕ! Инженерсемпе техниксем, учительсем, агрономсем, врачсем, наукăпа искусство тата литература работникĕсем! Совет предприятийĕсемпе учрежденийĕсенчи служащисем! Хамăрăн халăх хуçалăхне малалла çĕклесе пырас ĕçре рабочисемпе колхозниксене пулăшăр! Совет наукине, техникине, культурине малалла аталантарса пырăр!

40. Совет хĕрарăмĕсем! Производствăри специальноçсене вĕренсе алла илĕр, ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пырăр, сывлăшран тата химилле тапăннинчен хÿтĕленес ĕçе, санитари ĕçне, çыхăну ĕçне вĕренĕр! Нимĕç захватчикĕсене çĕмĕрсе тăкма, халăх хуçалăхне çĕклеме пĕтĕм вăя парар!

Сывă пулччăр совет хĕрарăмĕсем!

41. Совет çамрăкĕсемпе хĕрĕсем! Фронта пулăшас тесе, вăя шеллемесĕр ĕçлĕр, производство техникине вĕренсе алла илĕр, ĕç дисциплинине кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пырăр, çар ĕçне ывăнма пĕлмесĕр вĕренĕр!

Сывă пулччăр совет çамрăкĕсем!

42. Коммунистсемпе комсомолецсем! Фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешекенсен малти ретĕсенче пулăр!

43. Сывă пултăр аслă Совет Союзĕ — пирĕн Тăван çĕршыври халăхсен туслăхĕн, телейĕн тата мухтавĕн шанчăклă тĕрекĕ! Сывă пултăр пирĕн Советлă Тăван çĕршыв!

44. Сывă пултăр Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕ, Ленин—Сталин партийĕ, фашистла нимĕç захватчикĕсене çĕнтерессишĕн пыракан кĕрешĕве хавхалантарса тата организацилесе пырак анĕ!

45. Ленин ялавĕпе, Сталин ертсе пынипе—малалла, гитлерла Германие татăклăнах çĕмĕрсе тăкассишĕн, пирĕн тĕрĕс ĕç пĕтĕмĕшпех çĕнтерессишĕн малалла!

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕ.



Совет Союзĕн Маршалĕ С. К. ТИМОШЕНКО

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Паян, февралĕн 20-мĕшĕнче, 17 сехетре Совет Латвийĕн столицинче ВИЛЬНЮС (ВИЛЬНО) хулинче Белоруссири 3-мĕш фронт çарĕсен командующийĕ пулнă арми генералне И. Д. ЧЕРНЯХОВСКИЕ пытарăççĕ.

Совет Союзĕн çарĕпе флочĕ ЧЕРНЯХОВСКИЙ тупăкĕ умĕнче хăйсен çапăçури ялавĕсене тайăлтараççĕ, Хĕрлĕ Çарăн чи лайăх полководецĕсенчен пĕрине хисеп тăваççĕ.

ÇАКĂН ПЕК ПРИКАЗ ПАРАТĂП:

Арми генералне ЧЕРНЯХОВСКИЕ пытарнă сехетре ăна юлашки хут çар енчен хисеп тумалла, хамăр Тăван çĕршывăн столицинче МУСКАВРА, çĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм тăватă хут пĕр харăс персе, салют памалла.

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи февралĕн 20-мĕшĕ.

ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ яна салам

СОВЕТ СОЮЗĔН МАРШАЛНЕ С. К. ТИМОШЕНКО ЮЛТАША

ВКП(б) Центральный Комитечĕпе ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Сире Хĕрлĕ Çарăн паллă полководецĕсенчен пĕрине тата Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсене организацилекенсенчен пĕрине, 50 çул тултарнă кун салам яраççĕ.

ВКП(б) Центральный Комитечĕпе ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ хамăр Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн малалла та ăнăçлăн ĕçлесе пыма Сире сывлăх тата вăй сунаççĕ.

ПĔТĔМ СОЮЗРИ КОММУНИСТСЕН (БОЛЬШЕВИКСЕН) ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔ.

ССР СОЮЗĔН ХАЛĂХ КОМИССАРĔСЕН СОВЕЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 19-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 19-мĕшĕнче пирĕн çарсем ЗЕМЛАНД çурутравĕнче КЕНИГСБЕРГ хулинчен хĕвеланăçнелле татса тухма хăтланнă тăшман пехотипе танкĕсен атакисене сире-сире янă. Çавăнпа пĕр вăхăтрах КЕНИГСБЕРГ хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем тăшманăн Хĕвелтухăç Пруссири группировкине пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă, КВЕНЕН, ПАРЕСКЕН, ВАНГНИК, РОЗЕНВАЛЬДЕ, ЭНГЕЛЬСВАЛЬДЕ, ЗУГНИНЕН, ЛИХТВАЛЬДЕ, ХАЙШТЕРН, ПОДЛЕХЕН, ГЕДИЛЬГЕН, ГРУНЕНБЕРГ ялĕсене туртса илнĕ.

ГРУДЗЯНДЗ (ГРАУДЕНЦ) хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем ВИСЛА шывĕн хĕвеланăç хĕррипе çурçĕрелле наступлени туса пынă. НОЙЕНБУРГ хулине тата ГРОСС КОММОРСК, УНТЕРВЕРГ, ЗОНЕНВЕРДЕР ялĕсене туртса илнĕ. Ку районра ГРУДЗЯНДЗ (ГРАУДЕНЦ) хулинче хупăрласа илнĕ тăшман гарнизонне пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă.

БРЕСЛАУ (БРЕСЛАВЛЬ) хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, ОККЛИЦ, МОРШЕЛЛВИТЦ, АЛЬБРЕХТСДОРФ, ДАМСДОРФ, ШТЕЙН, ДАНКВИЦ, КЛАЙН-ЕЗЕРИЦ, ГРЕГЕРСДОРФ ялĕсене туртса илнĕ. Çакăнпа пĕр вăхăтрах пирĕн çарсем тăшманăн БРЕСЛАУ (БРЕСЛАВЛЬ) хулинчи группировкине пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă, хупăрласа илнĕ унка хĕссе пырса, ТРЕШЕН, БРОККАУ, ГЕРЦОГСХУФЕН, НОЙКИРХ, ГОЛЬДШМИДЕН, ТРАУТЕНЗЕ ялĕсене туртса илнĕ.

ДУНАЙ шывĕн çурçĕр хĕрринче, КОМАРНО хулинчен хĕвелтухăçнерехре, пирĕн ГРОН шывĕнчен хĕвеланăçнерехре кĕрешекен çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире янă, вăйлă çапăçнă хыççăн халăх пурăнакан темиçе пункта хăварнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата чылай пунктра тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Февралĕн 18-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 117 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 84 самолетне персе çакернĕ.

Ногинск районĕнчи колхозниксен паха пуçарăвне анлăн сарса пырар!

Пирĕн республикăри колхозсем иртнĕ çулта ялхуçалăх ĕçне ăнăçлă вĕçлерĕç, ăнса пулнă тырпула вăхăтра пухса кĕртрĕç, государство умĕнчи парăмсене вăхăтра парса татрĕç. Хĕрлĕ Çарăн историллĕ çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, пирĕн колхозсем планран иртерсе Хĕрлĕ Çар фондне пин-шер пăт тĕштырă, çĕрулми, пахча-çимĕç пачĕç. Ĕçкунĕ тăрăх та тырпул тата ытти продуктсем валеçрĕç.

Паллах, пирĕн колхозсен çак çитĕнĕвĕсене тунă çĕрте МТС-сем пысăк вырăн йышăннă. Иртнĕ çул республикăри МТС-сем пурĕ 347.228 гектар сухаланă, комбайнсемпе 29.819 гектар вырса пухнă. МТС молотилкисемпе 96.070 тонна тĕштырă çапса панă. Пирĕн МТС-сем колхозсене ялхуçалăх ĕçĕнче татах та пысăкрах пулăшу панă пулĕччĕç. Тракторсене юсама мастерскойсем тăвайри чылай МТС-сене тракторсене вăхăтра юсама чăрмантарать. МТС-сен паха машинисем, сарайсемпе лупасайсем çуккине пула, уçă çĕртех ларса, хĕвелпе, çумăрпа, çилпе тутăхса, шултăркаса пĕтеççĕ, çапла вара вăхăтсăр стройран тухаççĕ. Чылай МТС-сенче трактористсене пурăнма общежитисем çителĕксĕр, агротехникăна вĕренме кабинетсем çук тата ытти те.

Çакна шута илсе, Мускав облаçĕнчи Ногинск районĕнчи колхозниксем харпăрхăй МТС-не государство укçи-тенкисĕрех кăтартуллă МТС-сем тума чĕнсе каларĕç.

Ногинск МТС строительствин участникĕсем чĕнсе çырнине пирĕн çĕршыври колхозниксемпе колхозницăсем ăшă кăмăлпа кĕтсе илчĕç, МТС-сене культурăллă та кăтартуллă хуçалăхсем тăвассишĕн пикенсе ĕçлеме тытăнчĕç.

Çак паха пуçарăва пирĕн республикăри колхозниксем те ырласа йышăнчĕç. Етĕрне районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен МТС-ĕ валли тракторсене юсамалли мастерской, ялхуçалăх машинисене лартмалли сарая, мунчана çĕнĕрен тума, МТС-ăн 8 гектар йышăнакан картишĕ тавра карта тытса çавăрма йышăннă. Тракторсене сĕрмелли çусене усрамалли витнĕ сарай тума палăртнă. Етĕрне районĕ хыççăн Первомайски районри колхозниксем те хăйсен машинно-тракторнăй станцине машинăсем юсамалли сарай, тракторсем юсамалли мастерской, трактористсем пурăнмалли общежити туса пама йышăннă. Ишлей МТС-ĕнче те халăх стройки вăйлăн пырать. Вăрнар МТС-ĕнче икĕ сарай туса пĕтернĕ, 8 хваттерлĕ çурт тата сарай валли колхозниксен вăйĕпе 200 кубометр йывăç хатĕрленĕ. Элĕк районĕнчи колхозниксем МТС валли 50 трактор лартмалăх сарай тума йывăç турттараççĕ. Комсомольски районри МТС-а тунă çĕре, колхозниксемсĕр пуçне, служащисем хастарлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Кунта МТС-ри трактористсем тата районри служащисем 400 кубометр йывăç касса хатĕрленĕ. Пĕр кун хушшинче 12 колхоз 100 кубометр ытла йывăç турттарса панă. Çак питех те паха тата пархатарлă ĕç ытти районсенче те сарăлса пырать. Колхозниксем МТС-сене строительствăра пулăшни колхозсене çирĕплетес ĕç пулса тăнине лайăх ăнланаççĕ. Совет халăхĕн, колхоз хресченĕсен пуçарăвĕ питех те хăватлă, унăн вăйĕ чăннипех те пысăк. Колхоз хресченĕсем хăйсем пурне те тума пултарнине çак ĕçре тепĕр хут çирĕплетсе параççĕ. «Халăхи вăрçăн нимĕнпе танлаштарма çук йывăрлăхĕсем совет халăхĕн хурçа пек вăй-хăвачĕпе паттăрлăхне хавшатаймарĕç, татах та ытларах çирĕплетрĕç. Пирĕн халăх тивĕçлипех геройла халăх чапне илчĕ» (И. Сталин).

Пирĕн çĕршывра пархатарлă пуçарăва хăвăрт йышăнса илесси халăхăн йăлине кĕчĕ. Совет патриочĕсем çавăн пек пуçарăва йышăнса, ăна пуянлатаççĕ, малалла вăйлатса яраççĕ.

Анчах та уйрăм МТС-сен, çĕрĕç органĕсен тата районсен руководителĕсем Ногинск районĕнчи колхозниксен пуçарăвĕ государствăшăн питĕ пысăк та паха вырăн йышăнса тăнине ăнланса [illegible] илмен-ха. Çак пуçару иртнĕ çулсенче кăна организациленĕ МТС-семшĕн уйрăмах кирлĕ. Сĕнтĕрвăрри, Шăмăршă, Калинино, Октябрьски, Сиявăш МТС-ĕсенче строительствăна колхозниксене явăçтарас тĕлĕшпе ытла та çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Районри партипе совет тата комсомол организацийĕсен колхозниксемпе колхозницăсене Ногинск колхозникĕсен пуçарăвĕ çинчен тĕплĕн ăнлантарса памалла, вĕсене меслетне кашни районрах сарса ямалла.

Жданов ячĕпе тăракан колхоз уйăхлăхра... пĕр кубометр вутă хатĕрленĕ

СЕНТЕР. (Телефонпа, хамăр корр.). Вăрман хатĕрлевĕнче фронтри пек ĕçлемелли уйăхлăх вĕçленсе пырать. Анчах та район уйăхлăхра тунă ĕçсем пысăк мар: район чугун çул валли кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вутă хатĕрлемелли плана февралĕн 15-мĕшĕ тĕлне касас енĕпе 53 процент, турттарас енĕпе 55 процент çеç тултарнă. Вутă хатĕрлевĕнче район çакăн пек юлса пыни вăрманта ĕçлеме çынсемпе лашасем çителĕксĕр уйăрса панинчен, вăрман касакансемпе турттаракансен ĕçне уполномоченнăйсем урлă тĕрĕслесе тăманнинчен килет. Хальхи вăхăтра та районти колхозсенчен вăрманта ĕç вăйĕ плана пăхнинчен сахалтарах. Чылай колхозсенчен мобилизациленĕ çынсем вăрманта кăштах ĕçлеççĕ те каялла таврăнаççĕ. Сăмахран, «Луч» колхозран вăрмана ĕçлеме кайнă лавсем 1—2 кун ĕçлесенех килесене таврăннă. Ял Совечĕсемпе колхоз председателĕсем çавăн пек йĕркесĕрлĕхе хирĕç кĕрешмеççĕ, вăрман хатĕрлевĕнчен пăрăнакансем пирки тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ.

Районри колхозсенчен «Хĕрлĕ паттăр», «Çĕнĕ Юнка», «Первая борозда» тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсем çеç чугун çул валли вутă лайăх хатĕрлеççĕ. Ытти колхозсем уйăхлăхра тумалли ĕçсен графикне пăссах пыраççĕ. Вутă хатĕрлес ĕçлĕшпе уйрăмах «КИМ» (Кĕçĕн Тĕмерти ял Совечĕ), Жданов ячĕпе тăракан, «Смычка», «Заря» (Пушкăрт ял Совечĕ) колхозсем начар ĕçлеççĕ. Жданов ячĕпе тăракан колхоз уйăхлăхра вутă пĕр кубометр кăна хатĕрленĕ. Унăн пĕтĕмпе 280 кубометр хатĕрлемелле, 420 кубометр турттармалла. Вутă хатĕрлемелли плана хăçан тултарас тет-ши Жданов ячĕпе тăракан колхоз?

А. СОЛОВЬЕВ.

Хĕрлĕ Çарăн вăрçă искусстви

Хĕрлĕ Çарăн тăшмана пĕтерсе пыракан татăклă операцийĕсем, вăл операцисен ăнăçлăхĕ Сталинла стратегирен килеççĕ, Верховнăй Главнокомандовани пĕтĕм вăрçă ĕçĕсене тата вăрçăри уйрăм ĕçсене гениллĕ ертсе пынинчен килеççĕ.

Верховнăй Главнокомандовани вăрçăра эпир вăйлăрах пулас ыйтăва ăнăçлăн татса пачĕ. Хĕрлĕ Çар, оборонăллă хаяр çапăçусем тунă хыççăн, вăрçăн малтанхи тапхăрĕнче Германи çарĕсем тапăнса пынине чарса лартрĕ çеç мар, вĕсене пĕтĕмпех хавшатса тăкрĕ. Çав вăхăтра ĕнтĕ совет çарĕсем питĕ анлă наступлени тума резервсем хатĕрленĕ.

Нимĕçсем вăрçăн малтанхи тапхăрĕнчех хăйсен пĕтĕм вăйĕпе туллин усă курма хăтланчĕç. Ку ĕнтĕ вĕсен «çиçĕмле вăрçă» стратегийĕнчен тухнă. Совет командованийĕ нимĕçсен методне хирĕç хăйĕн методне кăларса тăратрĕ. Вăл методра татса паракан—ăнсăртран тухнă яланхи мар, яланхи факторсем: тыл çирĕплĕхĕ, çарăн моралле вăйĕ, дивизисен хисепĕпе пахалăхĕ, çара хĕçпăшаллантарни, çарăн ертсе пыракан составĕн организаторла пултарулăхĕ пулса тăраççĕ. Сталинла стратеги малашнехине курса тăнине пула 1944 çулта Хĕрлĕ Çар çав тери вăйлă пулса тăчĕ. Хĕрлĕ Çар командованийĕн аллинче нумай вăй пухăнса тăчĕ. Çаксене пула пĕр çул хушшинчех Хĕрлĕ Çар вунă пысăк наступлени тума пултарчĕ. Пырса çапмалăх вырăнсенче Хĕрлĕ Çар командованийĕ пĕрмаях тăшмантан вăйлăрах пулнă.

Сталин юлташăн стратегиллĕ руководстви пирĕн çарсене анлă çапăçусенче хăюллă маневрсем тума та май панă. Хĕрлĕ Çарăн 1944 çулта пулнă наступленилле тĕп операцийĕсене пăхсан, вĕсем таран тухăшпа питĕ чаплă пурнăçланă планăн пĕр пайĕ пулнине курма пулать. Сталинла стратегийĕн вăйĕ татса паракан ĕçсене палăртассинче тата ăçта вăйлăн пырса çапмаллине палăртассинче уйрăмăнах лайăх палăрчĕ.

Хĕрлĕ Çар 1944 çулта тĕп вăйпа пырса çапнисем кĕске вăхăтрах оперативлă тата стратегиллĕ ăнăçлăх тума май пачĕç. Тĕп вăйпа ялан ăнсăртран тата тăшман кĕтмен çĕрте пыра-пыра çапнă.

1944 çулхи февральпе март уйăхĕсенче Украинăри фронтсем пыра-пыра çапнисем тăшман кĕтмен çĕртен пулнă. Хĕрлĕ Çар ăнсăртран, çуркуне çитнĕ вăхăтра, çурхи шыв тапса аннипе çулсем пĕтнĕ вăхăтра, наступлени тума пултарассине нимĕç командованийĕ кĕтмен. Нимĕçсен Белоруссири группировкине Хĕрлĕ Çар вăйлăн пырса çапни те тăшманшăн çавăн пекех кĕтмен çĕртен пулнă. Гитлерла стратегсем шутланă тăрăх, çуллахи вăхăтра Хĕрлĕ Çар пуçласа ямалли наступлени Совет Союзĕпе Германи фрончĕн кăнтăрти секторĕнче пулмалла пулнă.

Хĕрлĕ Çар Совет Союзĕпе Германи фрончĕн тĕрлĕ участокĕнче пĕрин хыççăн теприн пыра-пыра çапнине пула, Германи командованийĕ Совет çарĕсем ăçтан пырса çапассине малтанах пĕлсе тăма пултарайман. Нимĕç штабĕ шутласа хунисем пурте йăнăш пулнă. Çавăн пирки те ĕнтĕ тăшман пĕтĕм фронт тăршшĕпе кускаласа çÿренĕ, анчах пĕр участокра та хăйĕн резервĕсемпе пулăшу пама пултарайман.

Хĕрлĕ Çарăн Верховнăй Главнокомандованийĕ 1944 çулта пулса иртнĕ çапăçусенче стратегиллĕ резервсемпе усă курас енĕпе чăн-чăн мастерлăх кăтартса пачĕ. Çавна пула ĕнтĕ Совет çарĕсем татса паракан вăхăтра, чи паха енсенче тăшмантан темĕн чухлĕ вăйлăрах пулма пултарнă. Малтанхи çулсенчи пекех пĕр вăхăтра наступлени туса пыракан темиçе фронта ертсе пырас тата вĕсен ĕçне пĕтĕçтерсе пырас стратегиллĕ руководствăн йывăр задачине Верховнăй Главнокомандовани çав тери лайăх пурнăçа кĕртрĕ. Хĕрлĕ Çар 1944 çулта вăйлăн пыра-пыра çапнине пула, тăшманăн стратегиллĕ тĕп группировкисене пĕрин хыççăн теприне аркатса тăкнă. Çапла вара, Германи фронтне пĕтĕмпех аркатса тăкнине пула, нимĕç çарĕсен хĕвеланăçнелле писене чакса каймалла пулчĕ, хăшпĕр тĕлте вĕсен Германи чикки урлă та каçса тармалла пулчĕ.

Хĕрлĕ Çарăн çитĕнĕвĕсем пирĕн оперативлă искусствăн теорийĕ кучухнехи чи малта пыракан теори пулнинчен, тăшманăн оперативлă искусствин теорине нумай кая хăварса иртсе кайнинчен те килеççĕ.

Операцисем вăхăтĕнче яланах хăюллă маневрсем анлăн туса ирттерни совет оперативлă искусствин тĕп уйрăмлăхĕ пулса тăрать. Çавăн пирки те ĕнтĕ 1944 çулта иртнĕ çапăçусенче тăшманăн пысăк группировкисене нумай чухне хупăрласа илме пултарнă. Маневрсем хăвăрт тума пултарни тăшманăн яланхи оборонине татнă çĕрте çеç мар, тăшман оборонине шăтарса кĕнĕ хыççăн шалалла наступлени туса пынă чухне те пысăк ăнăçлăхсем панă.

Сакна та палăртас пулать: тенчери пĕрремĕш вăрçă вăхăтĕнче те позициллĕ фронта сирсе пăрахнă хыççăн тактикăллă çитĕнĕве оперативлă çитĕнÿ пусăмне куçарассине чи йывăр ыйту тесе шутланă. Хĕрлĕ Çар татăклă çапăçусенче пуринче те тăшманăн оборонине пĕр-икĕ хут вăйлăн пыра-пыра çапсах татса кĕрсе пычĕ. Пĕр чухе çавăн пек ăнăçу наступленин пирвайхи кунĕнчех пулнă, кайран, çывăхри кунсенче вара, оборонăна 70—100 çухрăм таран шалалла çĕмĕрсе-çĕмĕрсе кĕнĕ. Совет çарĕсен наступленилле пысăк операцийĕсем чылайĕшĕсем 300—500 километрлă фронтра, пĕр вăхăтрах 3—5 çĕртен пырса тапăннипе палăрса тăнă. Çакна пула тăшман хăйне ăçтан чи вăйлăнрах пырса çапассине пĕлме пултарайман, çакăн пирки те унăн хăйĕн оперативлă резервĕсемпе усă курма чылай чухне май килмен.

Хĕрлĕ Çар наступленилле операцисем туса, тĕпрен пырса çапнă чухне, вăл артиллерипе танксем тĕлĕшĕнчен, авиацилле ытти тĕлĕшрен те тăшмантан яланах вăйлăрах пулнă. Ударлă группировкăсен шутĕнче артиллери, танксемпе утлă çарăн пысăк соединенийĕсем пурри, çĕр çинчи çарсене авиаци вăйлăн пулăшса тăни,—çаксем вĕсем пирĕн çарсене тăшман оборонине хăвăрт татса кĕме çеç мар, тăшман оборонине татнă хыççăн чакса пыракан тăшмана хăйĕн оборонин ăшĕнче хăвăрт йĕрлесе пыма та май панă.

Пирĕн наступленин талăкра 20—25 километра çитекен хăвăртлăхĕ чакса пыракан тăшман чăсĕсене тата унăн çĕнĕрен илсе пыракан резервĕсене çĕнĕ рубежсем çинче чарăнса, унта чăрмавсем тума тата персе тăрас ĕçе организацилеме май паман. Хăшпĕр чухне пирĕн çарсен наступленийĕ тăшман фронтне татса, уйрăм участоксене вакласа тăкнине пула, тăшман хăйĕн çар чăсĕсене ертсе пыма та пултарайман. Çавна пула Совет командованийĕ малтанхи тактикăллă ăнăçуран стратегиллĕ оперативлă ăнăçу туса хума пултарнă. Çакăн пек условире тăшмана вăл кĕтмен çĕртен пырса çапни паллă вырăн йышăнса тăрать. Тăшмана оперативлăн, вăл пачах та кĕтмен çĕртен пырса çапасси пĕр вăхăтрах анлă фронтра наступлени туса пынинчен, вăрçăн перегруппировкăсем тунинчен, маскировка дисциплинин çирĕп пулнинчен, маскировка мĕн хушнине пĕтĕмпех туса панине штабсем енчен пĕрмаях сăнаса тăнинчен килнĕ. Кунсăр пуçне совет çарĕсен яланах тĕплĕ информаци пулнă, тата вĕсем тăшманăн информацине тăтăшах пăрахăçа кăларса пынă.

Тыл пĕр чарăнмасăр ĕçлесе тăнине пула тата транспортпа çул юсакан çарсем хĕрÿллĕн ĕçленине пула, Хĕрлĕ Çар çав тери анлă та хăватлă çĕнтерÿсем тума пултарчĕ. Хальхи вăрçăра фашистла Германи иртнĕ вăрçăсенчи Германирен вăйлăрах тата хăрушăрах тăшман пулчĕ. Апла пулин те фашистла кĕтÿсене Хĕрлĕ Çар ăнăçлăн хăваласа пырать. Германи çарĕ поражени тÿсни Хĕрлĕ Çарăн хисепĕ ÿсниинчен çеç килмест. Хĕрлĕ Çарăн çар техники ытларах тата хăватларах пулнинчен, çар ĕçне лайăхрах вĕреннинчен те килет. Хĕрлĕ Çар çĕнтересси вăл, совет воинĕсем тĕрĕслĕхшĕн, ирĕклĕхшĕн вăрçнинчен, вĕсем хăйсен тăван çĕршывне хÿтĕленинчен тухса тăрать.

Халĕ ĕнтĕ Хĕрлĕ Çар воинĕсем моральпе политика тĕлĕшĕнчен çÿлте тăнине пĕтĕм тĕнче курать, совет халăхĕсен халиччен пулман паттăрлăхне курса, ирĕклĕхе юратакан пур халăхсем те савăнса тăраççĕ.

Сталин генийĕ хавхалантарса пыракан Хĕрлĕ Çарăн ăнăçăвĕсем вĕсем Хĕрлĕ Çар паттăр совет халăхĕн ывăлĕ пулнинчен килеççĕ. Çав ăнăçусем социализмлă экономикăн иксĕлми хăвачĕпе пуянлăхĕсем çинче никĕсленсе тăраççĕ. Çав ăнăçусем—большевиксен партийĕ ертсе пынипе пĕр çемьене пĕтĕçнĕ пирĕн çĕршыври мĕнпур халăхсен моральпе политика пĕрлĕхĕнчен килеççĕ. Аслă Октябрь çĕнтерсе илнисене хÿтĕлеме ура çине тăнă халăхпа Хĕрлĕ Çар уйăрăлми çыхăнса тăни,—акă ăçта вăл Гитлерăн ирсĕр ĕмĕчĕсене çĕмĕрсе, гитлеровецсене вĕлермеллех пырса çапнă вăйăн çăлкуçĕ.

Хĕрлĕ Çар 1945 çулхи январьте пуçласа янă анлă наступлени нимĕçсен Хĕвелтухăç Пруссири пысăк группировкине аркатса тăкрĕ. Çав пысăкран та пысăк операцире совет çарĕсем тăшман оборонине пĕр вăхăтрах пин километр сарлакĕш фронтра татса кĕрессине организацилеме пултарчĕç. Малтанах туса хатĕрленĕ оборона рубежĕсем те, хÿтĕленме лайăх, наступлени тума йывăр вырăнсем те (сăмахран Хĕвелтухăç Пруссири Мазур кÿллисем) нимĕçсене пулăшаймарĕç.

Хĕрлĕ Çар каллех пысăк хăвăртлăхсемпе наступлени тума пуçларĕ. Совет пехоти, тĕрлĕ енсенче çапăçса, хĕвеланăçнелле 500 километр таран çуçма пултарчĕ, талăкра, вăтамран илсен, 20 километр е ытларах та куçса пычĕ. Советăн хăвăрт куçакан соединенийĕсем хăшпĕр чухне талăкра 70—100 километр таран кайнисем пулнă. Çакăн пирки ĕнтĕ тăшман хăйне хăваласа пыракан совет çарĕсенчен хăпма пултарайман. Тăшман резервсем илсе пырса хушăри рубежсенче чарăнса тăма пултарайман. Çавăнпа та совет çарĕсем ăнăçлă маневрсем туса, тăшман çарĕсене хупăрла-хупăрла илнĕ. Январьти çапăçусенче совет çарĕсем Хĕвелтухăç Пруссире тата ытти çĕрте те нимĕçсен пысăк группировкисене хупăрласа илсе пĕтере-пĕтере тăкма пултарчĕç. Пĕр вăхăтрах темиçе çĕртен пыра-пыра çапнине пула, тăшманăн пĕтĕм фрончĕ арканса кайнă, уйрăм татăксем пулса вакланнă, тăшман чăсĕсем пĕр-пĕрин хушшинчи çыхăнăва çухатнă.

Хĕрлĕ Çар туса пыракан хальхи наступлени нацистла Германие стратегиллĕ çĕнĕ пысăк поражени кÿнĕ. Вăрçă хăйĕн татса паракан юлашки тапхăрне кĕчĕ. Союзлă виçĕ державăн — Совет Союзĕн, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен тата Великобританин — руководителĕсен Крымри конференцийĕнче палăртнă тăрăх, нацистла Германие хирĕç пыракан вăрçăн юлашки тапхăрĕнче пĕрлешсе кĕрешесси пирки пĕтĕмпех каласа татăлнă. «Пирĕн нимăта пăркаланмалла мар тĕллев,—тенĕ союзлă виçĕ держава руководителĕсен пĕлтерĕвĕнче,—Германи милитаризмĕпе нацизмне пĕтерсе, Германи урăх нихăçан та пĕтĕм тĕнчери мире пăсма пултармалла мар тăвасси пулать».

Хĕрлĕ Çарăн пысăк ăсталăхĕ, пирĕн союзниксен çарĕсем ăста çапăçса пынипе пĕрле, тăшмана тĕппипех аркатса тăкĕ.

Генерал-майор М. ЗАМЯТИН.

„Вăрçă историйĕн паллă тапхăрĕ“

АМЕРИКĂРИ ХАÇАТСЕМ ХĔРЛĔ ÇАРАН ÇИТĔНĔВĔСЕМ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрлĕ Çарăн çитĕнĕвĕсем çинчен Америкăри хаçатсем халĕ те пĕрмаях çыраççĕ. «Курьер Джорнэл» хаçат (Кантуки штатĕнчи Луисвильре тухать) çапла çырать: малашнехине шанакан наблюдательсем те Хĕрлĕ Çар çав тери вăйлăн, çав тери сывлăма та памалла мар вăйлăн пыра-пыра çапассине кĕтме пултарайман. «Вырăссен хĕллехи наступленийĕн пĕрремĕш уйăхĕ,—çырать хаçат,—вăрçă историйĕн чи паллă тапхăрĕ, гитлерла Германие аркатса тăкассине çывхартакан историри чи вăйлă çапăçу уйăхĕ пулса тăрать».

«ПМ» хаçатăн çар обозревателĕ Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсем çинчен çапла калать: «Варшава хулинчен пуçласа Берлин хапхи патне çитиччен Хĕрлĕ Çар Берлинпа Рейн хушши чухлĕ кайнă та ĕнтĕ».

Балтиморта тухакан «Сан» хаçат çакна палăртать: Хĕрлĕ Çар Будапешт патĕнче тунă çĕнтерÿ Сталинград патĕнче тунă çĕнтерÿрен çеç каярах тăрать. Гитлеровецсене пысăк çухатусем кÿнĕ, гитлерла шайка çĕнĕ катастрофа тÿснине хăйĕн халăхĕнчен пытараймасть ĕнтĕ. Çапла вара, нимĕçсен çарĕнче кăна мар, тылра та нимĕçсен шухăш-кăмăлĕсене тепĕр хут вилĕмле пырса çапнă.

Буффалăра тухакан «Экспресс» хаçат каланă тăрăх, нимĕçсем Вена патне пымалли çулсене пÿлсе тăракан Будапешта—индустрипе транспортăн питĕ паха центрне çухатни Сталинградра пулнă хыççăн чи пысăк катастрофа пулса тăрать. Çĕнĕ Орлеанра тухакан «Таймс Пикаюн» хаçат каланă тăрăх, Хĕрлĕ Çар Будапешт хулине илни çинчен пĕлтерни Крымри конференцин сасси пекех илтĕнсе кайрĕ, вăл Берлина хÿтĕлекенсене пит лайăх асăрхаттарни пулса тăрать. «Нью-Йорк таймс» тата «Ивнинг стар» хаçатсем те Будапешта илнине Хĕрлĕ Çарăн пит пысăк çитĕнĕвĕ тесе хаклаççĕ.

Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери конференцийĕнче

ЛОНДОН, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Енер Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕн ирхи ларăвĕнче Америкăри производствăллă профсоюзсен конгресĕн представителĕ Сидней Хиллмэн профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн никĕсĕсем çинчен калакан резолюцин проектне тăратнă. Çав проектра пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕн организациллĕ комитетне тумалли çинчен те каланă. Вăл комитета Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчен, Пĕрлешÿллĕ Королевствăран, Францирен, Совет Союзĕнчен тата Латинла Америкăри çĕршывсенчен виçшер çын кĕмелле; Вунтанири нацисен ытти пайĕнчен, профсоюзсен Пĕтĕм Тĕнчери Пĕрлешĕвĕнчен тата профсоюзсен Пĕтĕм Тĕнчери Секретариачĕсенчен икшер çын кĕмелле: Канадăран, Австралирен, Индирен, Китайран, Бельгирен, Голландирен, Норвегирен, Швецирен, Швейцарирен, Югославирен, Чехословакирен, Испанирен, Исландирен, Ирландирен, Болгарирен, Италирен, Румынирен, Финляндирен, Латинла Америкăри Ĕç Конфедерацийĕнчен пĕрер çын кĕмелле, тата христианла профсоюзсен Пĕтĕм Тĕнчери Конфедерацийĕнчен канаш паракан сасăпа пĕр çын кĕмелле.

Конференци тата «вăрçă хыççăнхи реконструкципе профсоюзсен халех кăларса тăратмалли требованийĕсем» çинчен калакан деклараци йышăннă. Декларацире çапла каланă: вăрçă хыççăн, туса хумалли мир вăл демократипе цивилизацие пĕтерсе лартасран çăлса хăварасшăн кĕрешÿ мĕнпур çынсене тивĕçлĕ пулмалла, тенĕ.

Декларацире юлашкинчен çапла каланă: «Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕ, тĕнчери организацилеме рабочисен пĕрлĕхне çав тери лайăх кăтартса панăскер, хăйĕн ĕçĕсене пĕтернĕ чухне профсоюзсемпе рабочисен тĕп прависен çак хартине пĕлтерет, çав правăсене конференци пур çĕршывсенче те йышăнтарма шут тытрĕ:

1. Рабочисем профсоюзсене пĕрлешме тата профсоюз ĕçĕсене йĕркеллĕн туса пыма, çав шутра коллективлă договорсем тума, пултармалла.
2. Рабочисем кооперативсем тата пĕрлешÿсене пулăшмалли ытти организацисем тума пултармалла.
3. Сăмах, пичет, пуху, тĕн тата политикăллă организаци ирĕклĕхĕ пулмалла.
4. Расине, ÿт тĕсне, тĕнне, арçынне хĕрарăмне кура, политикăпа экономика тата социальнăй пурнăç тĕлĕшĕнчен çынсемшĕн тан мар условисем туса хунине пĕтерсе лартмалла, пĕр пек ĕçшĕн пĕр пек тÿлемелле.

Çамрăксем çитĕннисен ĕçне туса тăраççĕ пулсан, вĕсем çитĕннисем илнĕ чухлĕ ĕç укçи илсе тăмалла.

5. Вĕренес тата квалификаци туянас тĕлĕшрен пурин те пĕртан майсем пулмалла.
6. Ĕçлес текенсем пурте тивĕçлĕ ĕç тупмалла, çав ĕçшĕн кирлĕ чухлĕ ĕç укçи илмелле.
7. Аçта кирлĕ, çавăнта кашни гражданина социальнăй пурнăçпа экономика тĕлĕшĕнчен хăрамалла мар тума тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла».

Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕн юлашки ларăвĕнче тунă организациллĕ комитет пĕрремĕш хут февралĕн 19-мĕшĕнче пуханать. Çав организациллĕ комитета конференции ĕçĕсем çинчен тата профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери организацийĕн принципĕсем çинчен манифест пичетлесе кăларма хушнă.

Конференци председателĕ Исаакс хăйĕн юлашки сăмахĕнче çапла каланă: «Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕ вĕçленет, анчах та унăн ĕçĕсем пуçланаççĕ çеç-ха. Эпĕ çапла пуласса шанатăп: пĕрле килĕштерсе ĕçлеме тăрăшни тата пирĕн хушăри тачă пĕрлĕх пирĕн организацисен ĕçĕнче те палăрĕ. Çав организацисем çак конференци çине рабочи класăн юхăмĕ тĕпренех улшăннине кăтартакан конференци тесе шутласа пăхĕç».

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, февралĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Рейнпа Маас шывĕсем хушшинче союзниксен çарĕсем, тăшман вăйлă хирĕç тăнине çĕнтерсе, наступлени туса пыраççĕ. Рейн облаçĕнчи Мойландпа юнашар ларакан ялсене тата Гох хулинчи çурçĕртерехре питĕ вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Гохран çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем Клеве вăрманне тăшмантан тасатнă та çав хуларан пĕр мильăра ларакан пункт патне çитнĕ. Бельгири Афферден районĕнче йывăр çапăçусем пыраççĕ.

Гросскампенбергран кăнтăр-хĕвелтухăçĕнерехре союзниксен çарĕсем Кеффельд хулине тăшмантан тасатнă та Кеффельдран кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра 900 метр ытла малалла кайнă. Союзниксен ытти чăсĕсем Ур шывĕ урлă каçнă, Визден хулинчен 3 миля çурçĕртерехри çĕнĕ вырăн патнелле 0,5 миля куçнă.

Эхтернахран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре (Люксембургра) союзниксен çарĕсем Рейн облаçĕнчи Крухтен тата Рорбах хулисене йышăннă, Гоммердинген хулине кĕрсе кайнă. Çав районран хĕвелтухăçнерехре союзниксем Рейн облаçĕнчи Шанквейлер хулине йышăннă та çав хуларан пĕр миля çурçĕртерехре ларакан пункт патне çитнĕ.

Февралĕн 19-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле çăмăл бомбардировщиксем Мангейм хулине тата Берлинри объектсене тапăннă.

Берлинри лару-тăру

ПАРИЖ, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Берлинран пыракан Швейцари çыннисем каланă тăрăх, Парижри радио çапла пĕлтерет: Берлинра çынсем пĕркунхи пекех хăраса пурăнаççĕ. Поездсем унта пиншер беженец илсе пыраççĕ. Беженецсем поездсем çине ларасшăн пулса, пĕр-пĕрине тытăça-тытăça илеççĕ, аманнисем, хăшпĕр чухне вилнисем те пулаççĕ.

ГЕТТЕБОРГ, февралĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Берлинран тарасси çав тери вăйланса кайнă. Енер Германирен килнĕ швед çыннисем пĕлтернĕ тăрăх, Любек хулинелле каякан çул çинче 20 километр тăршшĕ колоннăпа беженецсем тараççĕ. Хĕвелтухăçĕнчен тарса пыракансем Германи столицинче чарăнма шутламаççĕ ĕнтĕ. Берлинра, пĕр швед çынни каланă тăрăх, бомбăсем пăрахнине пула çĕмĕрĕлнĕ çурт-хуралтăсене юсама тахçанах пăрахнă. Берлинра васкасах баррикадăсем тăваççĕ. Строительство материалĕ вырăнне парксенче каснă йывăçсем каяççĕ, шĕвсе аннă çуртсене нумай вăхăт хушши хÿтĕленмелли вырăнсем тăваççĕ. Тиргартен урамĕнче тата унăн çывăхĕнчи районра баррикадăсем туса тултарнă. Чылай çуртсене минăсем лартса тухнă, теççĕ.

БЕЛГРАД ХУЛИНЕ ШУБАШИЧ ТАТА ЮГОСЛАВИ ПРАВИТЕЛЬСТВИН ЫТТИ ЧЛЕНĔСЕМ ПЫРСА ÇИТНĔ

БЕЛГРАД, февралĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). (Вăхăтра çитереймен). Февралĕн 16-мĕшĕнче каçхине Белграда Югославин Шубашич ертсе пыракан Лондонри правительствин членĕсем пырса çитнĕ.

Черчилльпе Иден Англие таврăнчĕ

ЛОНДОН, февралĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, премьер-министр Уинстон Черчилль паян Англие пынă. Англире вăл виçĕ эрне хушши пулман. Çак вăхăт хушшинче вăл Мальта утравĕ çинче Англипе Америка командованийĕ тунă канашлура, Крымри конференцире тата Грецире пулнă.

Афины хулинче пулнă хыççăн Черчилль Каира кайнă. Унта вăл виçĕ кун пурăннă. Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Антони Иден та çавăн пекех Лондона таврăннă. Премьер-министрпа пĕрле вăл Каир хулинче пулнă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ТОКИО РАЙОНĔ ÇИНЕ ÇАПЛАХ БОМБĂСЕМ ПĂРАХАÇÇĔ

ЛОНДОН, февралĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешÿллĕ командованийĕн штабĕ пĕлтернине панă. Пĕлтерÿре çапла каланă: Лусон утравĕ çинче американецсен 11-мĕш корпус чăсĕсем Батаан çурутравне туртса илнĕ.

ВАШИНГТОН, февралĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Лăпкă океан çинчи флочĕн штабĕ çапла пĕлтерет: американецсен 5-мĕш флочĕн авианосецĕсем çинчи самолетсем çаплах Токио районĕ çине бомбăсем пăрахаççĕ.

Малтанлăха палăртнă тăрăх, Америка линкорĕсемпе крейсерĕсем Иводзима утравне февралĕн 15-мĕшĕнче пенĕ чухне Япони сооруженийĕсене самаях пысăк сиен кÿнĕ. Америка карапĕсене пеме пуçланă японецсен батарейисене пусарса лартнă. Иводзима утравне Америка линкорĕсемпе крейсерĕсем çаплах персе тăраççĕ.

ТОКИО, февралĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 17-мĕшĕнче ирхине 7 сехетре американецсен авианосецĕсем çинчи самолетсем каллех Канто районĕпе Хонсю утравĕ çинчи Сидзуока префектурине тапăнма пуçланă.

АМЕРИКА ÇАРĔСЕМ ФИЛИППИН УТРАВĔСЕН УШКĂНĔНЧИ ТЕПĔР УТРАВ ÇИНЕ ПЫРСА АННИ

ЛОНДОН, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешÿллĕ командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Америка çарĕсем Коррегидор утравĕ çине (Манила бухтине кĕнĕ çĕрте) аннă та çав утрав çинчи паха пунктсене тытса илнĕ. Америка çарĕсен çухатăвĕсем пысăк мар. Коррегидор утравне тата Батаан çурутравне йышăннине пула, Америка карапĕсем Манила бухтине пĕр чăрмавсăрах кĕме пултараççĕ.

Америка командованийĕ Манилăри Япони гарнизонне хĕçпăшала пăрахма тата японецсен тылĕнче пурăнакан темиçе пин граждана ирĕке кăларма хушнă. Японецсем çав ультиматума йышăнман. Çавăн пирки халь Япони гарнизонне пĕтерсе тăкас ĕç малалла пулса пырать.

АМЕРИКА ÇАРĔСЕМ ИВОДЗИМА УТРАВĔ ÇИНЕ АННА

ЛОНДОН, февралĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). США-н Лăпкă океан çинчи флочĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Америкăн тинĕс пехотин чăсĕсем, Лăпкă океан çинчи флотăн карапĕсем тата аэродромсемпе авианосецсем çинчи авиаци вăйлăн пулăшнипе, Волкано утравĕсем хушшинчи Иводзимо утравĕ çине аннă.

ТОКИО, февралĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви çапла пĕлтерет: Японин Иводзимо утравĕ çинчи гарнизонĕ Америкăн çав утрав çине аннă çарĕсемпе вăйлă çапăçать.

ВАШИНГТОН, февралĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). США-н çар министерстви çапла пĕлтерет: Америкăн Мариан утравĕсем çинчи «Вĕçекен крепость» йышши бомбардировщикĕсем Японин Хонсю утравĕ çинчи промышленность объекчĕсене тапăннă.

Совет Союзĕн Мексикăри Посолĕн К. А. Уманскин тата унпа пĕрле вилнĕ çынсен ÿчĕсен кĕлне Мускава илсе килнĕ

США Президенчĕ Ф. Д. Рузвельт хушнипе совет влаçĕсене панă çар самолечĕпе февралĕн 19-мĕшĕнче Мускава январĕн 25-мĕшĕнче вилнĕ совет Посолĕн К. А. Уманскин, Посол арăмĕн Р. М. Уманскаян, Совет Союзĕн Мексикăри Посольствин пĕрремĕш секретарĕн Л. И. Тройницкин, çар атташи помощникĕн С. А. Савин-Лазаревăн тата Посольство атташин Ю. Е. Вдовинăн кĕлĕсене илсе пынă.

Вĕсен кĕлĕсене хунă урнăсене (савăтсене) кĕтсе илме аэродрома вилнисен тăванĕсем пынă. Кĕтсе илме тухнисем хушшинче çаксем пулнă: СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕсем А. Я. Вышинский, С. А. Лозовский, М. М. Литвинов, С. И. Кавтарадзе тата И. М. Майский, СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. Ф. Горкин, СССР Наркоминделĕн Латинла Америкăри çĕршывсен Отделĕн Заведующийĕ К. А. Михайлов, Мускав Совечĕн Председателĕн Заместителĕ П. В. Майоров, Мускав хулин коменданчĕ К. Р. Синилов генерал-лейтенант тата СССР Наркоминделĕн ответлă работникĕсем.

Аэродрома çавăн пекех тата Америкăн СССР-ти Посолĕ В. А. Гарриман господин тата Мексикăн СССР-ти Посолĕ Н. Басольс господин Мексика Посольствин дипломатиллĕ пĕтĕм составĕпе пĕрле пынă.

Аэродромра хисеплĕ хурал тăратнă.

Траурлă марш каланă вăхăтра В. М. Молотов тата пытарма организациленĕ Правительство Комиссийĕн членĕсем С. А. Лозовский, А. Ф. Горкин, К. А. Михайлов тата П. В. Майоров урнăсене траурлă катафалка çине илсе пырса лартнă.

Урнăсене Союзсен Çуртĕн кĕçĕн залне лартнă.

Ырă кăмăл

Яла пырса кĕнĕ чухнех кунти колхоза ĕçлеме юратакан, пуçтарулă та тирпейлĕ çын ертсе пынине колхозниксем пĕр кăмăлпа — колхоз хуçалăхне аталантарас кăмăлпа пурăннине туятăн. Урам вĕçĕнче темиçе çурт пур. Вăл çуртсем тавра карта тытса тухнă. Çав çуртсенчен инçех мар, лупамра, çĕнĕ пысăк çурт пуралаççĕ. Пуртă-пăчкă сасси кăна янраса тăрать.

Колхоз председателĕпе паллашсан та, колхозниксемпе калаçсан та шухăшсем улшăнмаççĕ. Пачах урăхла, колхоз ĕçĕпе ытларах паллашас кăмăл çуралать.

—Электростанци тăватпăр-ха,—терĕ колхоз председателĕ Алексей Емельянович, ĕçсем мĕнле пыни çинчен халлап пуçлансан.—Май праçникĕччен хута яратпăр. Çуртне пураласа пĕтереççĕ ĕнтĕ. Кăçал вăй çитеретпĕр пулĕ-ха...

Унтан вăл, вăрăмăн сывласа илчĕ те, иртнĕ çула аса илчĕ.

...Çураки çывхарса килнĕ. Анчах колхозăн выльăх апачĕсем те пулман, вăрлăх та çитмен, лашасем те начар пулнă.

Шăпах çав вăхăтра ĕнтĕ коммунист Алексей Емельянович Емельянова Çавалкассинчи «Çутталла» колхоз председателĕ пулса ĕçлеме суйланă. Колхозниксен шанăçĕ—хисеплĕ тивĕç, ăна ĕçре тÿрре кăларас пулать. Алексей Емельянович пек Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче писĕхнĕ çын урăхла тума та пултараймасть. Вара вăл актива пĕтĕçтерсе, вĕсене вырăнти резервсемпе усă курма мобилизацилет. Колхозниксене йывăрлăхсем çинчен калаçа парса, колхоза пулăшма йĕннĕ. Большевикла тÿрĕс сăмах яланах витĕмлĕ пулать. Колхозница А. Петрова юлташ колхоза кивçен 30 пăт вăрлăх парать. Ун хыççăн колхозниксем Кустин 30 пăт, Мокшин 10 пăт панă...

Çуракине ирттерме выльăх апачĕсем тупас шутпа Емельянов юлташ кÿршĕри колхозсене те сахал мар çÿренĕ. Уйкас Явăшран, Кÿлхĕрринчен — улăм, Мăн Явăшран, Услапаран—тырă илсе пынă.

Председатель колхоз хуçалăхĕшĕн тимлĕн тăрăшнине кура, колхозниксен ĕçлес хавасланăхĕ ÿснĕ. Утмăл çултан иртнĕ колхозник Григорий Гаврилов нихăçан та ĕçрен юлман, хушнă ĕçе пĕрре те пурнăçа кĕртмесĕр тăман. Çав вăхăтрах вăл пахалăх комиссийĕнче туса пынă: тырă акнă, вырнă, авăн çапнă çĕрте çитменлĕхсене пĕтерме, чылай чухне йăнăшсене тÿрлетме вĕрентнĕ. Вăл иртнĕ çулта 352 ĕçкунĕ тунă. Колхозница Мария Казанцева та 322 ĕçкунĕ тунă. Нина Проновăпа Семен Пономарев ертсе пыракан бригадăсенчи вунăшар колхозниксемпе колхозницăсем çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçленĕ.

Колхоз ĕçне лайăхлатма колхоз председательне партипе комсомол организацисем куллен пулăшу панă, параççĕ те. Парторганизацинче 9 çын, комсомол организацинче 14 çын тăрать. Вĕсем пурте ответлă вырăнсенче ĕçлесе, хăйсен примерĕпе, большевикла сăмахпа колхозниксене хавхалантарса ĕçлеме вĕрентеççĕ. Коммунистсемпе комсомолецсен вăйĕпе докладсемпе калаçусем пĕрмаях ирттереççĕ, стена хаçачĕ кăлараççĕ, хаçат-журналсем вуласа параççĕ. Колхозри вулав çуртĕнче стахановецсен кĕтесси пур. Унта паллă стахановецсен портречĕсем, кăтарту хăми çинче ăмăрту итогĕсене йĕркеллĕ кăтартса пынă. Миговаров юлташ ертсе пыракан драма кружокĕ сакăр хутчен концертсемпе спектакльсем лартса панă.

Халĕ ĕнтĕ ĕç итогĕсем куç умĕнчех: тырпулсене вăхăтра пуçтарса кĕртсе, государство умĕнчи обязательствăсене тултарнă, мĕнпур фондсене хывнă, парăмсене татнă. Хĕрлĕ Çар фондне темиçе пин пăт тырă панă. Колхозниксене ĕçкунĕ пуçне виçĕ килограма яхăн тырă валеççе панă. Ăмăртура мала тухнă Пронковăпа Пономарев юлташсем ертсе пыракан бригадăсенчи колхозниксене тата хушса тÿленĕ. Колхоз иртнĕ çулта кашни гектартан ыраш 15 центнер ытла, кĕрхи тулă 18 центнер илнĕ. Ытти культурăсен тухăçлăхĕ те нумай кая мар. Акă мĕншĕн ĕнтĕ халĕ электростанци пирки халлап пуçлансан, колхоз председателĕ «Кăçал вăй çитеретпĕр» тесе калать.

Электростанци тунă çĕре кайнă чухне Алексей Емельянович колхоз икĕ гектар çинче сад ĕрчетме йышăнни, унта 600 тĕп улмуççи, 500 тĕп хура çырла лартса хăварни, фермăсен çийĕсене пĕтĕмпех çĕтетни тата электростанци мĕнле пуласси çинчен каласа пачĕ. Электростанци çуртĕн тăршшĕ 15 метр, сарлакăшĕ 8 метр пулать. Ăна март уйăхĕччен туса пĕтереççĕ. Электростанци вăйĕпе хăма çуракан завод ĕçлемелле пулать. Электростанци колхозăн обществăллă çурчĕсене, выльăх-чĕрлĕх витисене, ял урамĕсене, колхозниксен килĕсене çутатать.

— Чăваш Автономи 25 çул тултарнине Ильич лампи çуттинче уявлатпăр,—савăнăçлăн сăмаха хутшăнчĕ вăтам çулхи пĕр колхозник.

Вăл—колхоз председателĕн строительство енĕпе ĕçлекен заместителĕ коммунист Яков Кустин. Канма пĕлмесĕр ĕçлет вăл. Колхозниксем хушнă ĕçе пурнăçа кĕртме мĕнпур вăйне, пĕлÿлĕхне парать. Электростанци çуртне тума йывăç тупмалла-и, машинăсене кÿрсе килмелле-и, станцăна хута яма материалсем кирлĕ-и,—пур ĕçе те вăхăтра тума тăрăшать Кустин юлташ.

Уйхир бригадисемпе фермăсенче те, тимĕрç лаççинче те, электростанци тунă çĕрти пекех, хĕрÿ ĕç пырать. Колхозра кашни хăйне хушнă ĕçе тăвать.

Колхоз кĕлечĕн çирĕп алăкĕ яри уçăлать. Кĕлетре çитес çуракинче акмалли вăрлăхсем. Вĕсене пĕтĕмпех сортласа тасатнă тата кондицие лартнă. Урам хушшипе кунсеренех тислĕк, торф тиенĕ лавсем иртеççĕ. Уйхире ĕнтĕ темиçе пин лав тислĕк, темиçе çĕр лав торф кăларнă. Таçта, ял хĕрринче, тимĕрç шаккани илтĕнет. Колхоз тимĕрçи ялхуçалăх машинисене пĕтĕмпех юсаса çитернĕ...

Фермăсен таса çурчĕсенче ĕнесем, сурăхсем калла-малла уткаласа çÿреççĕ. Вĕсем тутă та таса. Колхозăн выльăх-чĕрлĕхсем валли апат-симĕçсем çителĕклĕ таранах пур.

Çав ĕçсене пĕтĕмпех хăйсен иртнĕ çулхи ĕçĕсен паха çимĕçĕсемпе хавхаланнă колхозниксемпе колхозницăсем тăваççĕ. Вĕсене колхоз ĕçне парăннă председатель Алексей Емельянович Емельянов, бригадирсем Нина Матвеева, Гурий Капитонов, Анна Пронкова, Семен Пономарев юлташсем ертсе пыраççĕ. Председательпе бригадирсене тата ферма заведующийĕсене коммунистсемпе комсомолецсем, активистсем, стахановецсем пулăшса тăраççĕ. Колхоз ĕçĕпе тĕплĕрехех паллашсан, пур ĕçсем те, килĕштерсе пурăнакан çемьери пек, ăнса пынине куратăн. Çапла пулмалла та ĕнтĕ.

Колхоз государство ĕçĕсене пурнăçлассине, фронта, фронтовиксен çемьисене пулăшассине те манăçа хăвармасть. Вăрман хатĕрлес, укçа-тенкĕ пухас, аш-какай парас тата ытти нумай ĕçсем,—çаксене пурне те кунта куллен тумалли ĕç вырăнне шутлаççĕ. Чăн та, культурăллă-массăллă ĕçе лайăхлатас, яла илемлетес, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе сахал мар ĕç тумалла. Анчах колхозра малашне те ĕç дисциплинине çирĕплетсе пырсан, колхозниксен активлăхне çĕклесе пырсан, вăл ĕçсене те ăнăçлăн пурнăça кĕртесси çине шанма пулать.

Çĕнтерÿ кунĕ çывхарса килет. Фронтран çĕнтерсе таврăннă паттăр воинсене хамăрăн ĕçсемпе тата хуçалăхпа савăнса паллаштармалла пултăр. Çавăн пек халĕ Çавалкассинчи «Çутталла» колхоз колхозникĕсен кăмăлĕ. Ырă та пурнăçлă кăмăл. Çакă вăл пирĕн паттăр воинсемшĕн чи хаклă парне пулĕ.

М. ТИТОВ.

Калинино районĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00528. Типографии № 1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000